25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 НОЯБРЬ 12 КĔÇНЕРНИКУН 264 (6199) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Юратнă çулпуçăн сăмахĕсем çине ответлесе фронта пулăшассине вăйлатар!

Çулпуçăн сăмахне кашни ĕççынни патне çитерер

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклада пĕтĕм совет çĕршывĕ пысăк тимлĕхпе итлерĕ. Аслă çулпуç пирĕн государствăн тата парти оргăнĕсен иртнĕ тапхăрти тылри организаторла ĕçне, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçă ĕçĕсем мĕнле пынине, Европăри иккĕмĕш фронт пирки тăракан ыйтăва, ССР Союзĕ, Англия, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем гитлерла Германие тата унăн Европăри союзникĕсене хирĕç тунă боевой союз кунран-кун çирĕпленсе пынине тарăн анализ туса çутатса пачĕ.

Сталин юлташ хамăрăн халăхпа Хĕрлĕ Çар умне усă та витĕмлĕ задачăсем лартрĕ: гитлерла государствăпа ăна хавхалантарса пыракансене, гитлерла çарпа унăн руководителĕсене пĕтерсе тăкмалла; Европăри «гитлерла çĕнĕ йĕркене», çав ылханлă йĕркене çĕмĕрсе тăкса ăна тăвакансене ответ тыттармалла.

«Эпир совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатма пултаратпăр тата тасатма тивĕç те», тет Сталин юлташ 1942 çулти ноябрĕн 7-мĕшĕнче панă приказра.

Çулпуç хăйĕн доклачĕпе приказĕнче лартнă аслă задачăсем пирĕн пĕтĕм халăха, фронтрипе тылри çулăмлă патриотсене çĕнĕ çĕнтерӳсем патне чĕнеççĕ, ирсĕр тăшмана хирĕç пĕтĕм вăй хурса кĕрешме, фронта танксемпе самолетсем, тупăсемпе боеприпассем, ытти хĕçпăшалсемпе тумтирсем, тырпул, апкакай, сĕт-çу ытларах та ытларах парса тăрассишĕн хастаррăн ĕçлеме хавхалантарассĕ. Сталин юлташăн кашни сăмахĕ кĕрешӳре ĕçре пире çĕнĕ вăй шанчăк кӳрет.

Çĕршывăн пиншер те миллионшар çынсем Сталин юлташăн докладне ноябрĕн 6-мĕшĕнче репродукторсем умне тăрса итленĕ, çав аслă документ пичетленнĕ хаçатсене илсен, ăна татах вуласа тухаççĕ. Республикăри пулăхăн предприятисенче, колхозсенче хавхаланулла митингсем, пухусем пулса иртрĕç. Çав митингсенче пухусенче ĕçлекенсем иртнĕ çулталăк хушшинче, уйрăмах Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура хăйсем мĕнле çитĕнӳсем тунине пăхса тухаççĕ, çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Çапла, Канашри вагонсем юсакан заводри нумай цехсенче агитаторсемпе уйрăм коммунистсем рабочисене Сталин юлташăн доклачĕпе паллаштарнă. Вагонсем юсакан цехри рабочисен митингĕ пулса иртнĕ. Сталин юлташăн докладне сӳтсе-явнă хыççăн цех коллективĕ ноябрь уйăхĕнчи программăна срокчен малтан пурнăçлама, планран иртерсе 5 вагон юсаса кăларма, кашни рабочин ĕç тухăçлăхне вăтамран 230 процента çитерме, продукцин хăйне ларакан хакне, октябрьтипе танлаштарсан, 8 процент чакарма тата кивĕ детальсемпе туллинрех усă курса ноябрь уйăхĕнче 10 пин тенкĕ перекетлесе хăварма обязательство илнĕ. Çавăн пекех «Авангард» артель коллективĕ те çулталăк планне срокчен малтан тултарма, ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче ĕççыннисене кирлĕ таварсем 350 пин тенкĕлĕх туса кăларма пулнă.

Çапла ĕççыннисем, çулпуç докладне сӳтсе-явнă хыççăн, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, татах та пысăкрах утăмсемпе малалла—çĕнĕ çĕнтерӳсем патне кайма хавхаланаççĕ.

Сталин юлташ тылри организаторла ĕçе паха вырăна хурса хакланă пирĕн тылри пысăк çитĕнӳсене кăмăлне татах та ытларах çĕклет.

«Çак организаторла тата строительствăри пĕтĕм йывăр ĕçе туса пынине пула пирĕн çĕршыв кăна мар, тата тылри çынсем хăйсем те улшăнса çĕнелчĕç,—тесе палăртать Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче. — Çынсем типтерлĕрех, хастарлăрах, дисциплинăллăрах пулса тăчĕç, вăрçă ыйтнă пек ĕçлеме вĕренчĕç, хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи тата ăна хӳтĕлекенсем умĕнчи—Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен тивĕçне ăнланса илме тытăнчĕç. Хăйсен гражданла тивĕçне ăнланман çынсем, çапкаланчăк та сӳрĕк çынсем тылра сахалланнăçемĕн сахалланса пыраççĕ. Хăйсен граждăнла тивĕçне ăнланакан çынсен организованноçĕпе дисциплини çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе пырать».

Çулпуç лартнă задачăсене пурнăça кĕртес тесен, пирĕн ĕçре тата организованнăрах та дисциплинăллăрах, типтерлĕрех те перекетлĕрех, хастарлăрах та ĕçченрех пулмалла. Çав задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме малта пыракан рабочисемпе колхозниксене кăна мар, мĕнпур рабочисене, мĕнпур колхозниксене — мĕнпур ĕççыннисене мобилизацилемелле.

Çавăнпа та кунта пирĕн парти организацийĕсен паянхи пĕрремĕш задачи —Сталин юлташăн Октябрь уявĕнчи доклачĕпе приказне республикăри ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса парасси, çулпуçăн кашни сăмахне кашни ĕççыннин чĕри патне çитересси пулса тăрать. Хальхи вăхăтри пĕтĕм партиллĕ-массăллă ĕçе çулпуçăн доклачĕпе приказне тĕп никĕсе хурса туса пырас пулать. Мĕнпур агитациллĕ-организаторла ĕçе çĕнĕ сывлăш, çĕнĕ хавхалану кӳмелле.

Ку енĕпе ĕнтĕ районсенче уйрăм парторганизацисем малтанхи утăмсене тунă темелле. Çапла, Сталин юлташăн доклачĕпе приказне ĕççыннисене ăнлантарас енĕпе ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕ пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен, агитколлективсен руководителĕсен тата парти активĕн районри канашлăвне ирттернĕ. Çак кунсенче комсомол активĕн районри пухăвĕ пулать. Çавăн пекех ялсовет, колхоз председателĕсен, ялти интеллигенцин канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Анчах кунта ĕç канашлусемпех çырлахса тăма юрамасть. Çулпуç лартнă задачăсене ĕççыннисене ăнлантарса пама, вĕсене çулталăкри çитĕнӳсемпе, Çĕнĕ çулталăкри обязательствăсемпе çыхăнтарса пама пĕтĕм вăя хумалла.

Агитаторсен ĕçне пуçăн пысăк вырăн уйăрмалла. Кашни пуçламăш парторганизацирен агитаторсене Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тĕплĕн вĕрентме, вĕсене ĕççыннисем хушшинче ĕçлеме ăслă хатĕрлемелле. Агитаторсен ĕçне ялсенче, бригадăсенче, колхозниксен çемйисенче ирттерекен калаçусем, докладсем, плакатсем, лозунгсем, стена хаçачĕсем урлă туса пымалла. Ĕçре çĕнтерӳ тăвакансене, малта пыракансене пулăшмалла, ĕçре юлакансене çĕнĕ пуçарусемпе хавхалантармалла.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе çĕнĕрен вăйлантараса, Сталин юлташăн Октябрь уявĕ кунĕсенчи доклачĕпе приказне ĕççыннисене вырнаштарассипе ĕçлесе пыни вăрçă вăхăтĕнчи задачăсене пурнăçа кĕртме кирлĕ пĕтĕм майсене тупса парать.

Юлашки хыпарсем

ГИТЛЕР ПЕТЭНА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Виширан радио Гитлер Петэна чĕнсе калани çинчен пĕлтернĕ. Гитлер Виши правительствине Германи войскисем Франци оккупациленмен зонине кĕрсе кайни çинчен, вĕсем Франци Вăтаçĕр тинĕс çыранне тата Корсика утравне йышăнма шутлани çинчен пĕлтерет.

Хăйĕн çĕнĕ агрессийĕн вăрă-хуралла характерне пытарас шутпа, Гитлер çак ĕçе Франци хăйĕн интересĕсене хӳтĕлес тесе хăтланать. Франци халăхĕ хирĕç тăрасран хăраса, Гитлер Петэна çак ĕçе пулăшма чĕнет. Петэна Вишири пĕтĕм правительствăна вырăнтах хăварма сăмах парать, вĕсене «пĕтĕм Франци территорийĕ тĕлĕшпе» пĕр чарăмсăр çӳреме право парас награддама пулать.

ГЕРМАНИ ВОЙСКИСЕМ ФРАНЦИН ОККУПАЦИЛЕМЕН ЗОНИНЕ КĔРСЕ КАЙНĂ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян 7 сехетре ирхине Гитлер приказĕ тăрăх Германи войскисем Шаллон тю Саон патĕнче демаркаци линийĕ урлă каçнă та Лион патнелле куçса пынă, 10 сехетре ирхине Германи бронетанкăсен отрячĕсем Лимож витĕр тухса кайнă.

НИМĔÇ ВОЙСКИСЕМ ФРАНЦИ ОККУПАЦИЛЕМЕН ЗОНИНЕ КĔНИНЕ ХИРĔÇ ПЕТЭН ПРОТЕСТ ПАНĂ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Виширан официаллă майпа пĕлтернĕ тăрăх, Петэн паян Германи Франци штедприне çапла каланă: Германи войскисем Франци оккупациленмен зонине кĕни Германипе Франци хушшинчи перемири çинчен тунă килĕшӳве пăсни пулать, тенĕ.

ПЕТЭНПА ВЕЙГАН ВИШИРЕН ПАЛЛА МАР ÇĔРЕЛЛЕ ТУХСА КАЙНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Цюрихран пĕлтерекенсем тăрăх, Петэнпа Вейган Виширен паллă мар çĕрелле тухса кайнă.

ÇĔРШЫВ УМĔНЧИ ХАМĂР ТИВĔÇЕ ПУРНĂÇЛАТПĂР

КАНАШ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче, промартельсемпе учреждениcенче, шкулсенче Сталин юлташăн доклачĕпе приказне пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яваççĕ.

Вагонсем юсакан заводри нумай цехсенче агитаторсемпе уйрăм коммунистсем рабочисене Сталин юлташăн доклачĕпе паллаштарнă. Ĕнер вагонсем юсакан цехри рабочисен митингĕ пулса иртнĕ. Сталин юлташăн докладне сӳтсе-явнă хыççăн, цех коллективĕ ноябрь уйăхĕнчи программăна срокчен малтан пурнăçлама, планран иртерсе 5 вагон юсаса кăларма, кашни рабочин ĕç тухăçлăхне вăтамран 230 процента çитерме, продукцин хăйне ларакан хакне, октябрьтипе танлаштарсан, 8 процент чакарма тата кивĕ детальсемпе туллинрех усă курса, ноябрь уйăхĕнче 10 пин тенкĕ перекетлесе хăварма обязательство илнĕ.

Çавăн пекех «Авангард» артель коллективĕ те çулталăк планне срокчен малтан тултарма, ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем 350 пин тенкĕлĕх туса кăларма пулнă.

— Çĕршыв умĕнчи хамăр тивĕçе пурнăçлатпăр,—çак лозунгпа ĕçлет халĕ Канаш хулинчи кашни рабочи.

Н. НИКИТИН,
ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ.

Çулпуçăн сăмахне—халăх хушшине

СĔНТĔРВĂРРИ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Ноябрĕн 9-мĕшĕнче районри коммунистсен пухăвĕнче Сталин юлташăн доклачĕпе приказне сӳтсе-яврăмăр. Çак ыйтупах ĕнер хулари ĕççыннисен митингне ирттертĕмĕр. Унта 400 çын ытла пулчĕ. Сталин юлташăн доклачĕпе паллашнă хыççăн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн лекторĕ Иванов юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса пачĕ.

Сталин юлташăн докладне ăнлантарса пама ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ районри парти активне колхозсене ячĕ.

К. РОСТОВЦЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сталин доклачĕпе хавхаланса

Сталин юлташăн доклачĕ кашни ĕççынни чĕрине çĕнĕ вăй-хăват кĕртрĕ. Этемлĕхĕн ирсĕр тăшманĕсене, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерсе тăкас шанчăк тата ытларах çирĕпленчĕ.

Ĕнер Куславкка районĕнчи предприятисемпе учреждениcенче, колхозсенче, машинно-тракторнăй станцинче—пурĕ 17 çĕрте — Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклада ăнлантарас шутпа нумай çынлă митингсемпе пухусем пулса иртнĕ.

Апат-çимĕç комбинатĕнчи рабочи Крылов юлташ митингра хĕрӳллĕ сăмах тухса каларĕ:

— Çулпуç хăйĕн докладĕнче халăхăн шухăш-кăмăлĕсене уççăн кăтартса пачĕ. Пирĕн халăх гитлерла государствăна тата ăна хавхалантарса пыракансене пĕтерсе тăкассине çирĕппĕн шанса тăрать,—терĕ вăл.—Тăшмана аркатса тăкас сехете хăвăртрах çывхартас тесен, пирĕн тылра фронтри пек ĕçлемелле, хамăрăн стахановла ĕçпе Хĕрлĕ Çара пулăшмалла. Эпĕ яланах ĕç нормине тултарса ĕçленĕ, малашне куллех икĕ çыншăн ĕçлеме сăмах паратăп,—терĕ.

Стахановка Соколова юлташ митингра çапла каларĕ:

— Ноябрь уйăхĕнче фронтпа çĕршыв валли продукци ытларах туса кăлармалла, вара хамăрăн Хĕрлĕ Çара тăшманпа кĕрешме çăмăлтарах пулĕ. Эпĕ кулленхи задание 200—210 процентран кая мар пурнăçлама обязательство илетĕп,—терĕ.

Апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕ IV-мĕш квартал планне 5 кун маларах—декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне—пурнăçлама пулчĕ.

Сталин юлташ докладне ответлесе, МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем авăн çапас ĕçе вăйлатма, çитес çураки валли ялхуçалăх инвентарĕсене юсассине хăвăртлатма обязательство илнĕ.

Сталин юлташăн историллĕ докладне ăнлантарас ĕç колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Колхозниксем, Сталин юлташăн приказне ответлесе, ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлеме обязательствăсем илеççĕ.

Сталин юлташăн приказĕ фронта вăйлăнрах пулăшма чĕнет

Канаш районĕнче парти активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта пухăннă колхозсен тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсене, районри учреждениcемпе предприятисен руководителĕсене, пуçламăш парторганизацисен тата комсомол организацийĕсен секретарĕсене ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Добродушев юлташ Сталин юлташăн докладĕнчен район умне тухса тăракан черетлĕ задачăсем çинчен доклад туса пачĕ.

Канашлура колхозсемпе ялсовет председателĕсем, предприятисемпе учреждениcен руководителĕсем, партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсен секретарĕсем тухса калаçрĕç.

— Сталин юлташăн доклачĕ пире, колхозниксемпе колхозницăсене, фронтри хамăр юлташсене татах та вăйлăнрах пулăшма чĕнет,—тет Крупская ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Мартынов юлташ.—Эпир 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр. Октябрь уявĕ тĕлне авăн çапса пĕтертĕмĕр, государствăна тырă, аш-какай, сĕт-çу, çĕрулми тата пахча-çимĕç парса татрăмăр, кĕрхи çĕртме планне те ытлашшипех пурнăçларăмăр. Пирĕн колхозниксем халĕ çитес çулхи вăйлă тыршăн кĕрешĕве тухрĕç: минераллă удобренисем тата юр тытмалли щитсем хатĕрлеме тытăнчĕç. Ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне эпир вăл ĕçсене вĕçлеме тăрăшатпăр.

«Вторая пятилетка» колхоз председателĕ Анисимов юлташ канашлура çапла пĕлтерчĕ: Сталин юлташăн докладне радио тăрăх итленĕ хыççăн пирĕн колхозниксем ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме обязательство илчĕç. Вăл обязательствăна ăнăçлăн пурнăçлас тесе, эпир çине тăрсах авăн çапатпăр.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне колхозниксене ăнлантарса парас ĕç пысăк активлăхпа пулса пырать.

П. СЕРГЕЕВ.
ВКП(б) Канаш райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

ÇĔНĔ ÇĔКЛЕНӲ

ÇĔМĔРЛЕ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Мартынов юлташ директор пулса тăракан комбинат Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура лайăх ĕçлерĕ: иртнĕ уйăхри ĕçсен планне 153,5 процент тултарчĕ. Уйрăм цехсенчен Коваль, Назаров тата Петров юлташсен цехĕсем малта пычĕç. Вĕсем хăйсен уйăхри заданийĕсене срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç.

Комбинатри чылай рабочисем октябрьте сентябрьтинчен тухăçлăрах ĕçлерĕç. Петров юлташăн цехĕнчи Миночкина, Герасимова, Карасева тата Барыгина стахановкăсем уйăхри нормăна 200—300 процент тултарчĕç. Филимонов юлташăн цехĕнчи Масловпа Киреев рабочисен ĕç тухăçлăхĕ те çавăнтан кая мар.

Сталин юлташăн доклачĕ рабочисен ĕçри çĕнĕ çĕкленĕвне пуçарчĕ. Çулпуçăн сăмахĕ çине ответлесе, рабочисем татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулаççĕ. Сăмахран, стахановец Г. Дмитриев юлташ, нормăна 250 процент тултараканскер, малашне 300 процентран кая мар тултарма пулчĕ. Çавăн пек обязательствăсем рабочисем çеç мар, цех коллективĕсем те илеççĕ.

К. ДМИТРИЕВ,
Комбинатри завком председателĕ.

Колхозниксен хастарлăхĕ ӳсет

ÇĔРПӲ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн доклачĕпе приказне ăнлантарса пама агитаторсен канашлуне ирттертĕмĕр. Унта пурĕ 80 çын пулчĕ. Кунсăр пуçне Сталин юлташăн доклачĕпе приказне ăнлантарса пама парти активĕнчен 20 çынна колхозсене янă. Ĕнер 18 колхозра колхозниксен пухăвĕсем пулса иртнĕ.

Сталин юлташăн докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем колхозсенче хăйсем докладсем туса параççĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Пидуганов юлташ Хыркасси ялсоветĕнчи «Кульмет» колхозра доклад туса панă. Ун хыççăн колхозниксем кăçалхи ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме, ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи парăмсене татма обязательство илнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Пирĕн карапсем Балтика тинĕсĕнче противникăн 10 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Сталинград районĕнче хулан заводсем ларакан пайĕнче противникăн вак группăсем пирĕн оборонăна сăрхăнса кĕме хăтланнă, анчах та вĕсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Хулан кăнтăр енчи пайĕнче Н-ски часть атака туса противникăн çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен икĕ рота таран пехотине сапаласа янă тата противникăн пĕр танкне персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн боецсем 5 пулемет, 40 винтовка тата темиçе ещĕк гранатăпа патрон тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине сайра-хутран артиллерипе персе тăнă. Глебов юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем 3 блиндажа, темиçе пулемет точкине тата противникăн наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн пехоти 20 танк пулăшса пынипе тунă тăватă атакăна сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Степченко капитан ертсе пыракан красноармеецсем пĕр çирĕплетнĕ высотана йышăнса илнĕ. Гитлеровецсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 200 вилĕ таран, 4 пулемет, 15 автомат тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай выртса юлнă. Краснофлотец Шумский юлташ çав çапăçура тăшманăн пулеметне тытса илнĕ те унпа персе 20 гитлеровеца вĕлернĕ. Отделени командирĕ Гулько юлташ 25 нимĕçе, Рыбалко юлташ—10 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре гварди майорĕ Матрушенко юлташ ертсе пыракан артиллеристсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 15 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн 5 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 465 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Артиллерипе тата минометсемпе персе, тăшманăн 22 дзотне, 16 блиндажĕпе землянкине çĕмĕрнĕ, 2 пулемета пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Ленинград патне пымалли вырăнсенче виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 22 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Полесье облаçĕнчи партизансен виçĕ отрячĕ пĕрлешсе нимĕçсен çар эшелонне тапăннă. Партизансем çав поезда чарнă та ун çине пеме тытăннă. Пуçланса кайнă тытăçура партизансем нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне, вăл шутра 75 эсэсовеца, вĕлернĕ.

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен ушкăнĕ шоссе çинчи икĕ кĕпере çунтарса янă тата икĕ хула хушшинчи телефон çыхăнăвне татнă.

* * *

Румынсен пĕрремĕш пехотнăй дивизийĕнчи 93-мĕш полкăн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Теодор Шутя çапла каласа панă: «Румынсен 5-мĕш егерски полкĕнчи салтаксен чылай пысăк ушкăнĕ нумаях пулмасть атакăна кайма килĕшмен. Нимĕç чаçĕсем çав полка хĕçпăшалсăрлатнă та ăна çывăхри тыла илсе кайнă. Нимĕç командованийĕ хушнă тăрăх, 47 румын салтакне персе вĕлернĕ».

* * *

Грецири партизансем нимĕçсен Крит утравĕ çинчи Харакас районĕнчи аэродромне тапăннă. Патриотсем нимĕçсен 3 самолетне сирпĕнтерсе янă, бензин складне çунтарса янă тата 37 гитлеровеца вĕлернĕ.

Ноябрĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград районĕнче, Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ тата разведка тунă. Н-ски чаçăн боецĕсем противник тăракан вырăна кĕрсе кайса 70 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, пĕр противотанковăй тупа тата 2 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕç пехотин пĕр роти пирĕн оборонăн малти хĕррине çывăхарма хăтланнă. Çапăçура пехотăн икĕ взвочĕ таран çухалсан, противник хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противник çине персе тăнă. Н-ски чаçăн артиллеристсем нимĕçсен çĕре чавса лартнă 3 танкне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери противникăн боеприпассем хунă пысăк складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем противникăн пехотипе танкĕсене хирĕç активлăн кĕрешнĕ. Ĕнер кунĕпех пынă хаяр çапăçусенче нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чаçсем противникăн 12 танкне персе çĕмĕрнĕ, 9 танкне çунтарса янă. Нимĕçсен юсавлă 7 танкне, 2 бронемашинине, 3 орудине, ултă кĕпçеллĕ миномете тата штабăн автомашинине тытса илнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре нимĕç пехотин батальонĕ Н-ски чаçăн позицийĕсене атакăланă. Нимĕçсен уйрăм ушкăнĕсем пирĕн оборона ăшне кĕрсе кайнă пулнă. Хаяррăн çапăçса, совет боецĕсем противникăн çав ушкăнĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пехотăн хĕçпăшалĕпе тата артиллерипе персе, нимĕçсен 350 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 23 блиндажне çĕмĕрнĕ тата противникăн разведка тăвакан темиçе вак группине сапаласа янă. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе вăйлăн çапăçнă. Гитлеровецсем партизансене çавăрса илме хăтланнă. Меллĕ маневр туса, партизансем хăйсене çавăрса илнĕ вырăнтан тухнă та нимĕçсене тылран пырса тапăннă. Хаяр тытăçура нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Калинин облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсем хуралланă кĕпер патне пырса тухнă. Нимĕçсен хуралне вĕлерсе пĕтерсе, партизансем çав кĕпере сирпĕнтерсе янă тата телефон линине темиçе километр тăршшĕнче пăсса хунă.

* * *

Гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ совет районĕсенчи халăха питĕ мăшкăллаççĕ. Совет çыннисен наци тивĕçлĕхĕпе этемлĕх тивĕçлĕхне катас тесе нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вĕсене ятарласа тунă номерлĕ биркăсем çактарса çӳретеççĕ. Нумаях пулмасть нимĕçсен 161-мĕш пехотнăй дивизийĕн командованийĕ тыл начальникне панă 4-мĕш номерлĕ приказа тытса илнĕ. Кунта çав приказран хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «Вырăссен гражданла халăхĕ паллă пулса тăтăр тесе, 12 çултан иртнĕ кашни гражданăн пĕчĕк хăма татăкĕ (бирка) çакса çӳремелле. Çав пĕчĕк хăма татăкĕ çине—çав çын списокра шутланса тăракан ялăн ятне тата вăл списокра миçемĕш вырăнта тăнине кăтартакан номере çырнă пулмалла». Çав дивизин штабĕ панă уйрăм распоряженире çапла каланă: «Çынсем, уйрăмах та хĕрарăмсем, хăйсем ăçта пурăннине тата хăйсен номерне кăтартакан биркăсене çакса çӳремеççĕ. Приказа пăсакансене хĕнемелле тата арестлемелле», тенĕ.

* * *

Валона районĕнче (Албанире) Албани патриочĕсем фураж складне хураллаccа тăракан итальянец салтакĕсене персе вĕлернĕ те утăн пысăк запасне çунтарса янă. Çак кунсенче Либрашт районĕнчи партизансем Итали салтакĕсен казармине темиçе граната ывăтнă. 28 оккупант вилнĕ.

Авăн çапса пĕтермелли çирĕмкунлăх

Колхозсем васкасах авăн çапаççĕ, государствăна тырă параççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн историллĕ докладне районри колхозсенче чĕререн кăмăлласа сӳтсе-яваççĕ. Çулпуçăн сулăмлă сăмахĕсене, вăл çĕнтерӳ пирĕн алăрах пулассине шантарса каланине, çак аслă ĕçе тума пĕтĕм ĕççыннисене фронтпа тăван çĕршыва активлăн пулăшса тăма чĕннине кашни колхозникпа колхозница ăшшăн йышăнать.

Çулпуçăн доклачĕпе хавхаланса районри колхозсенче производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ пуçланчĕ. Авăн çапса пĕтерессишĕн, государствăна тырă парса татассишĕн фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăха кашни колхозникпе колхозница активлăн хутшăннă. Ĕнер, ноябрĕн 10-мĕшĕнче, районри колхозсем пурĕ 129 гектар çинчи тырра çапрĕç, талăкри ĕç графикне ăнăçлăн пурнăçларĕç. Авăн çапнă çĕрте трактор молотилкисем 4, лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăсем 35 ĕçлерĕç.

Государствăна тырă парас ĕçре ĕнер 225 лаша ĕçленĕ, вĕсемпе хатĕрлев пунктне пурĕ 543 центнер тырă леçнĕ. Кунсăр пуçне ĕнер районри колхозсем хатĕрлев пунктне 337 центнер çĕрулми, 32 центнер махорка, техникăллă культурăсем 68 центнер турттарса кайнă, ку ĕçре пурĕ 337 лаша ĕçленĕ.

Авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсем çитес кунсенче татах та вăйлăн ӳсме кирлĕ. Сталин юлташăн доклачĕпе приказне колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пама партипе совет тата комсомол организацийĕсен активĕ колхозсене кайрĕ. Сталин сăмахне итленĕ хыççăн пур çĕрте те ĕç пысăкрах çĕкленӳпе пулса пыни курăнать. Вăл çĕкленĕве ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе çирĕплетсе пымалла. Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра район республикăра малти вырăна тухмалла.

С. СЕРГЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пĕрремĕш кунăн графикне ирттерсе тултарнă

ЭЛĔК, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн докладне итленĕ хыççăн халĕ районри колхозсенче производствăллă çĕкленӳ татах та вăйлăн ӳссе пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пĕтĕмĕшпех хăвăрт вĕçлессишĕн фронтри пек ĕçлеççĕ. Çирĕмкунлăхăн пĕрремĕш кунĕнче—ноябрĕн 10-мĕшĕнче—районри колхозсем авăн çапмалли графике иртттерсе пурнăçларĕç. Ĕнерхи кун пурĕ 152 гектар çинчи тырра çапнă, районри 92 колхозран 40-ĕшĕ авăн çапас ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç.

Государствăна тырă леççе парас ĕç те вăйланчĕ. Паян районри 33 колхоз Заготзерно пунктне 209 лавпа 633 центнер тырă турттарса кайрĕç. Паянхи куна 4 колхоз государство умĕнчи пур парăмсене те пĕтĕмĕшпех парса татнă.

Авăн çапас ĕçе татах та ăнăçлăрах туса пырас тĕлĕшпе, итем çинчи ĕçсене пуçтарса кĕнĕ колхозсен молотилкисене ытти колхозсене куçарса лартатпăр. Çапла районри кашни молотилкăпа туллин усă курма тăрăшатпăр.

И. ИВАНОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Исмендерти «Радио» колхоз членĕсем пур ĕçе те вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыраççĕ. Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе пырать. Государствăна 1942 çулта памалли тырра парса татнă, Хĕрлĕ Çар фондне 48 центнер тырă хывнă. Государствăна памалли аш-какай, сĕт-çу, çăм обязательствисене те пĕтĕмĕшпех парса татнă.

Колхозниксем кăçал пур енĕпе те лайăх ĕçлеççĕ. Колхозăн обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ йышлăн ĕрчесе пырать. Фермăсенче пур йышши выльăхсем те планпа пăхнинчен ытларах. Вĕсене хĕл каçарма лайăх условисем тунă: витесем ăшă, апат-çимĕç çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Сталин юлташăн 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ докладне итленĕ хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем тата хĕрӳллĕнрех ĕçлеме пуçларĕç. Авăн çапнă çĕрте ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пырать. Кашни колхозник ик-виçĕ çыншăн ĕçлеме тăрăшать. Хăшпĕр бригадăсем авăн çапса пĕтерчĕ, килес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçланчĕ. Пайланман фондсене планпа пăхнинчен ытларах хурса хăварнă, вăрлăхлăх тырăсене сортлама тытăннă.

Колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеççĕ. Нумаях пулмасть боецсем валли çăматăсем тума 20 килограмм çăм уйăрса пачĕç тата тирсем, алшишчăлхасем, алшăллисемпе простынясем пухнă.

Я. СИГАЙ.

Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те иртттерсе пурнăçларĕ

КАЛИНИНО, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Район, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кăçал пур йышши выльăхсене те планран ирттерсе ĕрчетме обязательство илнĕччĕ. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем çак обязательствăна чыслăн пурнăçа кĕртрĕç.

Мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне 2.618 пуçа çитерсе çулталăкри плана 104,6 процент, сыснасен хисепне 3.917 пуçа çитерсе плана 122,2 процент, сурăхсен хисепне 4.358 пуçа çитерсе плана 100,1 процент пурнăçларăмăр. Нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре паха çитĕнӳсем турĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана ĕне-пăрусем енĕпе районри 48 колхоз, сыснасем енĕпе 45 колхоз, сурăхсем енĕпе 47 колхоз иртттерсе тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Юманайĕнчи Коминтерн ячĕпе тăракан колхоз илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе плана çулран çул иртттерсе тултарса пырать. Кăçал та колхоз выльăхсен хисепне вăйлăн ӳстерчĕ. Пур йышши çамрăк выльăхсене те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерчĕ.

Район ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Выльăхсене лайăх пăхса хĕл каçармалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановление пурнăçларĕ. Паянхи куна районри колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн пур витисене те хĕле хатĕрлесе çитерчĕ, выльăх-чĕрлĕхĕн апат-çимĕç базине çителĕклĕ таран хывса хăварнă.

А. ИВАНОВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Йĕпреç МТС-ĕнчи стахановецсем

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçленипе тата СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ трактористсемпе комбайнерсене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе, машинно-тракторнăй станцин бригадисем тата вуншар уйрăм трактористсемпе комбайнерсем стахановла паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

И. Воробьев юлташ ертсе пыракан 8-мĕш номерлĕ бригада октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кашни трактор пуçне 515,6 гектар сухаланă. Тракторист Н. Подяков юлташ «У—2» тракторпа 251,7 гектар сухаласа, 86 килограмм горючи перекетленĕ. М. Матвеев юлташ урапаллă «СХТЗ» тракторпа 285,5 гектар сухаланă. Н. Назаров тракторист уйрăмах лайăх ĕçлет, вăл газогенераторлă тракторпа кăçал 468,37 гектар сухаласа плана 132 процент тултарнă, 293 килограмм горючи перекетленĕ.

Коммунист Н. Яковлев юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада та тухăçлăн ĕçлет. Тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне бригада 119 процент тултарнă. Бригадир Яковлев çамрăк трактористкăсене ĕçре вĕрентсе, пулăшса пырать, вĕсене стахановецсен ретне тăма пулăшать. Агрипина Терентьева «У—2» тракторпа кăçал 227 гектар сухаланă, А. Терентьева трактористка лайăх ĕçленипе республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕç илнĕ. Матрена Кириллова трактористка пулса пĕрремĕш çул çеç ĕçлет-ха. Çапла пулсан та вăл «У—2» тракторпа 353 гектар сухаласа, çулталăк планне 173 процент тултарнă, комсомолка Федосия Карпова «СХТЗ» тракторпа 301 гектар сухаланă. Унăн тракторĕ кăçал пĕтĕмпе 424 гектар сухалас вырăнне 830 гектар сухаланă.

Стахановла ĕçлекен трактористсемпе трактористкăсем ытти бригадăсенче те сахал мар. 1-мĕш бригадăри тракторист С. Миронов юлташ иртнĕ çул фронтра нимĕç захватчикĕсемпе кĕрешнĕ. Фронтран аманса таврăннă хыççăн вăл каллех тракторпа ĕçлеме тытăннă, «СХТЗ» тракторпа вăл 241 гектар сухаланă, 135 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

— Фронтра нимĕç оккупанчĕсемпе мĕнле кĕрешнĕ, тылра та çавăн пек ĕçлетĕп. Хамăн пĕлĕве, хамăн мĕнпур вăя фронта пулăшас ĕçе паратăп,—тет тракторист С. Миронов юлташ.

Комбайнпа тырпул пухса кĕртес ĕçре те трактористсемпе комбайнерсем стахановла ĕçленĕ. 7-мĕш бригадăри комбайнер П. Маркиянов юлташ «Коммунар» комбайнпа (помощникĕ çамрăк хĕрача М. Михайлова, тракторист А. Подяков) кăçал 450 гектар тырă вырнă, 232 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Комбайнсемпе тырă вырса пухас плана А. Сергеев, А. Иванов, Ф. Атамов, М. Громов, Н. Ильин 120—160 процент тултарнă. Комбайнерсен стахановла ĕçне пула МТС кăçал тырăсене комбайнсемпе вырмалли плана 118,2 процент тултарчĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Иранăн премьер-министрĕ г. Ахмед Гаман СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталина янă телеграмма

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн наци уявĕ 25 çул тултарнă май эпĕ Сирĕн превосходительствăна чунтан хĕпĕртесе питĕ хĕрӳллĕн саламлатăп, Сирĕн превосходительствăна хăвăра тата пирĕнпе туслă аслă совет нацине чунтан-чĕререн телей сунатăп.

АХМЕД ГАМАН.

США государственнăй секретарĕ Корделл Хэлл Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарнĕ В. М. Молотова янă телеграмма

Совет республикине туни 25 çул тултарнă май эпĕ, Сирĕн превосходительство, мана çакăн çинчен пĕлтерме ирĕк пама ыйтатăп: Американăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствипе халăхĕ нацистла агрессин вăйĕсем сирĕн тăван çĕршыва хаяррăн тапăннă вăхăтра Российăн çарĕпе халăхĕ çав тери пысăк паттăрлăх кăтартнипе пĕтĕм чĕререн савăнать. Этемлĕхĕн ирĕклĕхне сыхласа усрассишĕн пыракан çак гигантла çапăçура манăн çĕршыв хăйĕн вăйĕсене пухса пырать, пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç çапăçас ĕçре çирĕплленсе пырать.

Эпĕ çакна ĕненсе тăратăп: Сирĕн наци, манăн наци тата пĕрлешнĕ мĕнпур нацисем пĕрле тăрăшни пире çапăçу хирĕсенче анчах мар, пулас мир çулĕ çинче те татăклă çĕнтерӳ парĕ.

КОРДЕЛЛ ХЭЛЛ.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине уявланă майпа илнĕ саламлă телеграммăсем

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă майпа çакăн пек саламлă телеграммăсем илнĕ: Американăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕн личнăй представителĕнчен г-н Гарриманран, США çар министрĕнчен г. Стимсонран, Англире Американăн ССР Союзĕнчи корреспонденчĕсен ассоциацийĕнчен, Турци республикин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕнчен г. Менеменджиоглуран, Югослави королĕнчен II-мĕш Петртан тата Югослави ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕнчен г. Нинчичран илнĕ.

Сталинград çыннисем çак куксенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Хĕвел анса тĕттĕм пула пуçласанах Атăл чĕрĕлет. Каçăсем çинче çынсем васкаса ĕçлеççĕ.

Акă, каçă патне Н-ски гвардейски чаçăн подразделенийĕ пырса тăчĕ. Çийĕнчех паром çине ларма, тиеме тытăнчĕç. Таçта çывăхра бомбăсем çурăла-çурăла каяççĕ. Паром Атăлăн сылтăм енчи çыранĕ патне пырса тăчĕ. Гвардеецсем пĕр сăмах чĕнмесĕр Сталинградăн суранланса пĕтнĕ çĕрĕ çине анаççĕ.

Атака тума хушакан приказ килчĕ. Заводсен районĕнче гвардеецсем бандитсене утăм хыççăн утăм хĕссе пыраççĕ. Çапăçу час-часах штык вĕççĕн тăрса çапăçнипе вĕçленет. Пĕр пысăк чул çуртра тата икĕ пĕчĕк çуртра çирĕпленсе ларнă фашистсем подвалсенчен вăйлăн персе тăнă. Вĕсене пульăсемпе те, гранатăсемпе те лектерме пулман. Вара малта тăракан наблюдательнăй пунктран оруди расчечĕсене тĕрĕс даннăйсем панă та, тупăсем кĕрлеме тытăннă. Гвардеецсем питех те тĕл пенĕ. Бетона çĕмĕрекен 130 снарядран 85-шĕ тĕлех пырса лекнĕ. Бетона çĕмĕрекен снаряд вăл хулăн стенана шăтарса тухать те çурăлса каять, шалта вара чĕрри нимĕн те тăрса юлмасть. Акă тимĕрпе бетонран тунă подвала çĕмĕрнĕ. Çуртсем фашистсемшĕн масар шăтăкĕ пулса тăнă. Нумаях пулмасть Сталинградăн кăнтăр енчи секторĕнче çав тери вăйлă çапăçусем пынă. Нимĕçсем совет воинĕсем хĕссе пынине тытса чарас тесе тем пекех тăрăшнă. Вут-çулăмпа металл стени пирĕн танксемпе пехотăна çул пӳлсе тăнă. Анчах, акă, фронт артиллерийĕн снарячĕсем çурăла-çурăла кая пуçланă. Сывлăша çĕр муклашкисем, кирпĕчсем, йывăççем сирпĕне-сирпĕне кайнă. Дзотсем ванса турпас та тусан пулса кайнă.

Каçпа çав участокра пĕр нимĕç те юлман. Вĕсем каялла чакман, мĕншĕн тесен никам та чакма пултарайман! Артиллеристсем гитлеровецсене пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтернĕ.

Н-ски гвардейски артиллери полкĕ Сталинградшăн виçĕ эрне хушши çапăçать. Çав вăхăт хушшинче унăн батарейисем противникăн темиçе пехотнăй полкне сапаласа янă тата пĕтерсе тăкнă, тăшманăн артиллерин 24 батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса лартнă, темиçе автоколоннăна çунтарса янă. Сталинград вăрçăн тимĕрçĕ лаççи пулса тăнă, унта совет воинĕсен çирĕплĕхĕ, хастарлăхĕ тата çапăçас мастерлăхĕ туптанса пырать.

Н. МАРКОВСКИЙ.

Пирĕн земляксем

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ

Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ывăлĕсем тăван çĕршывшăн паттăррăн та çирĕппĕн çапăçаççĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕ, сержант Ананьев, тăшманăн йышлă ушкăнĕ умĕнче те пĕр утăм каялла чакман. Вăл вырăс ялĕсемпе хулисене хӳтĕлессишĕн çапăçса, хăйĕн тăван чăваш çĕршывĕшĕн, хăй халăхĕн телейĕшĕн кĕрешнине аван пĕлет.

Нимĕçсем батарея позицийĕ çине пырса сăрăннă. Оруди расчетĕнче Ананьев наводчик пĕчченех тăрса юлнă. Гитлеровецсем унран мĕнпурĕ те 50 метрта çеç тăнă. Анчах паттăр воин хăраса ӳкмен. Хăй юлташĕсемшĕн тавăрас тесе çунаканскер, вăл пĕчченех пĕтĕм расчет тăвас ĕçе тунă, фашистсене хăйĕн орудийĕнчен персе шрапнельпе ăшаланă. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе Ананьев юлташ пулемет патне выртнă та тăхлан çăмăрĕ çутарса тăшмана çĕр çумне пăчăртнă.

Фашистсем вăйлăн персе тăнине чăтаймасăр каялла чакнă. Çав вăхăт тĕлне пырса çитнĕ пирĕн пехота тăшмана пуçĕпех сирсе пăрахнă. Ананьевăн орудийĕ умĕнче хăй пĕтерсе тăкнă фрицсен хĕрĕхе яхăн виллин выртса юлнă. Чăваш халăхĕн мухтава тивĕç ывăлне правительство наградине пама тăратнă.

М. ЯКИМОВ.

Колхозниксен пулăшăвĕ

Чугунçул транспорчĕ—Хĕрлĕ Çарăн пĕрремĕш помощникĕ. Чугунçул транспорчĕ мĕнле ĕçленинчен фронтри çапăçусен ăнăçлăхĕ килет. Çавна железнодорожниксем хăйсем çеç мар, пирĕн колхозниксем те лайăх ăнланаççĕ.

Канаш дистанци çывăхĕнчи колхозниксем чугунçула хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç. Вĕсем, хулари служащисемпе пĕрле чугунçул çине ĕçлеме тухса, 370 погоннăй метр çула юсарĕç, 2.228 погоннăй метр çула хăпартса тӳрлетрĕç, юр тытмалли щитсем сахал мар турĕç. Çавна май Канаш дистанцийĕнчи çул пахалăхĕ октябрьте, сентябрьтипе танлаштарсан, чылай лайăхланчĕ.

Чугунçула вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕле хатĕрленме активлăн пулăшнăшăн Хусан чугунçулĕн руководстви пурĕ 21 çынна хисеплĕ грамотăсемпе наградăланă, 24 çынна тав туса укçан премиленĕ. Вĕсен шутĕнче—Канаш районĕнчи «Мотор» колхоз членĕсем В. тата И. Ивановăсем, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Алексеева, Яковлева тата Волкова юлташсем. Чугунçула пулăшас ĕçе лайăх организацилесе ертсе пынăшăн ВКП(б) Канаш хула комитечĕн секретарьне Никитин юлташа Çулйĕр Халăх Комиссарĕн наградине пама тăратнă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç лайăхланчĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Хулари финанс пайĕ III-мĕш квартал планне тултарайман пулнă. Финанс работникĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, Аслă Октябрь 25 çул тултарнă тĕле прорывран тухма обязательство илнĕччĕ. Ăмăртăва вăйлатса пынă май, вĕсем хăйсен ĕçĕнче пысăк улшăнусем турĕç. Финанс пайĕ октябрь уйăх планне 110 процента яхăн, IV-мĕш квартал планне пĕр уйăх хушшинчех 39,1 процент тултарчĕ. Паянхи куна вăл çурт-йĕршĕн тата çĕршĕн пухмалли налогсене пĕтĕмпех пухса пĕтерсе, IV-мĕш квартал планне ытлашшипех тултарчĕ.

Хулари активистсем çак ĕçре пример кăтартаççĕ. Заем уполномоченнăйĕсем пулса ĕçлекен килхуçи хĕрарăмĕсем Пушкинăпа Чумейкина тата урам комитечĕн председателĕ Кирель юлташсем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсен участокĕсенче пурăнакансенчен чылайĕшĕсем хăйсен государство умĕнчи парăмĕсене пĕтĕмпех парса татрĕç.

Совет Союзĕпе Канада пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем яни çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Канадăн премьер-министрĕнчен г. Маккензи Лингран çакăн пек телеграмма илнĕ:

«Темиçе кун каялла Российăна Канадăн пĕрремĕш посланникне янипе усă курса, эпĕ Сирĕн превосходительствăна чунтан-чĕререн салам калатăп. Эпĕ, Феодор Гусев господин Оттавăна пырсан, ăна саламлама хавас пултăм. Гусев господина Канадăри пĕрремĕш совет посланникĕ вырăнне лартнине тата Дан Уильгрэс господина Совет Союзне Канадăн пĕрремĕш посланникĕ туса янине Канадăри халăхсем питĕ хытă хавхаланса кĕтсе илчĕç. Совет Союзне çĕнĕ пост йышăнма кайнă чухне Канадăн çĕнĕ посланникĕ Российăн хастарлă халăхне мĕнпур канадецсем ырă сунса каланă сăмаха илсе пырĕ. Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе халăхĕсем агрессие хирĕç тăнă чухне кăтартакан харсăрлăхпа паттăрлăх канадецсене вĕçĕмсĕр хытă савăнтарнине сăмахпа каласа пама та çук. Эпир çакна ĕненсе тăратпăр: пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем яни пирĕн çĕршывсем пĕр-пĕрне ырă кăмăлпа ăнланасси тата пĕр-пĕринпе таччăн пĕрлешсе ĕçлесси малалла аталанас ĕçре пысăк результатсем парĕ. Эпир ĕненетпĕр: çакă вăл малашне пирĕн пĕрлехи интерессене тивĕçтермелли тата пирĕн икĕ çĕршыва пĕр-пĕринпе пĕтĕм тĕнчери туслăхпа тата ырă кăмăлпа тачăрах çыхăнтармалли утăмсенчен пĕри пулса тăрĕ.

В. Л. МАККЕНЗИ ЛИНГ.

Турцири Совет посольствинче тунă йышăну

АНКАРА, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Анкарара Совет посольствинче Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă май йышăну туса иртттернĕ. Йышăнура Турци правительствин мĕнпур членĕсем—премьер-министрпа Сараджоглупа пĕрле, Турцин генеральнăй штабĕн представителĕсем, союзлă тата туслă çĕршывсен дипломатиллĕ представителĕсем, Турцири обществăпа политика деятелĕсем нумай, писательсем, журналистсем тата ют çĕршывсен пичечĕсен представителĕсем пулнă.

Стокгольмра Совет миссийĕнче тунă йышăну

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольмра совет миссийĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă май йышăну туса иртттернĕ. Йышăнура Швецири политикăпа общество деятелĕсем, союзлă тата туслă державăсен дипломатиллĕ представителĕсем, Швеци журналисчĕсемпе ют çĕршывсен журналисчĕсем пулнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă ятпа Англире туса иртттернĕ митингсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрьти революци 25 çул тултарнине хисеплесе Англири нумай хуласенче митингсем туса иртттернĕ. Блейдонра (Дурсан графствинче) тунă пысăк митингра горняксен федерацийĕн председателĕ Лоутер сăмах тухса каланă. «Совет Российи пурăннă 25 çул хушшинче Англире ăна нихçан та хальхи пек лайăх ăнланманччĕ-ха тата унăн çав тери лайăх енĕсене хальхи пек пысăк хак паманччĕ-ха,—тенĕ вăл.— Кирек ăçта кайсан та, кирек кампа калаçсан та, пур çĕрте те эсир çакăн пек пĕр шухăш илтетĕр: паян эпир Совет Российи пурăннипе пула пурăнатпăр».

Пысăк митингсем тата Бирмингамра, Ковентрире, Манчестерте тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ.

Грентонра „Сталинград эрни“ туса иртттереççĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Трентон хулин мэрĕ (Трентон—Нью Джерси штатĕнчи чи пысăк хуласенчен пĕри) Хартман ноябрĕн 8-мĕшĕнчен пуçарса хулара «Сталинград эрни» туса иртттересси çинчен пĕлтернĕ.

Вашингтонри совет посольствине Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи профсоюз организацийĕсемпе ытти организацисем Сталинграда паттăррăн хӳтĕлекенсене яракан саламсем пыраççĕ.

Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль паян ирхине Меншен-Хаузра Лондон хулин лордмэрĕ çуллен туса иртттерекен йышăнура сăмах тухса каланă.

Африкăри операцисем çинчен Черчилль çапла каланă: «Пирĕн умра—çĕнĕ явлени, питĕ чаплă çĕнтерӳ. Роммелĕн армине тартнă, унăн çапăçма пултарас вăйне нумай пĕтернĕ. Эпир çав çапăçăва пĕр тĕллевпе, тăшманăн хĕçпăшаллă вăйĕсене пирĕншĕн катастрофа питех те йывăр, тӳрленми пулма пултаракан пунктра пĕтерсе тăкас тĕллевпе тунă».

«Ку вăл вĕçĕ мар-ха,—тенĕ Черчилль,—ку вăл вĕçĕн пуçламĕшĕ те мар-ха, анчах та вăл пуçламĕшĕн вĕçĕ пулма пултарать. Халиччен нацистсем сывлăшра пуç пулса тăнипе ыттисене хирĕç час-часах пĕр шеллемесĕр усă курса тăнă; паянтан вара вĕсен сывлăшра ыттисем пуç пулса тăнипе тĕл пулма тивĕ»,—тенĕ.

«Эпир тунă çĕнтерӳ Египета хӳтĕлес ĕçре татăклă тата юлашки çĕнтерӳ пулса тăрĕ. Анчах та Египетшăн пыракан çапăçу, вăл хăй пысăк çапăçу пулсан та, Пĕрлешӳллĕ Штатсем Вăтăçĕр Тинĕсĕн хĕвеланăçĕнчи вĕçĕнче тума пуçланă чаплă ĕçĕн пуçламĕшĕ пулса тăмалла; çав ĕçре пирĕн çар, пирĕн авиаци тата, пуринчен ытларах, пирĕн флот паха та хисеплĕ вырăн йышăнса тăраççĕ».

«Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ,—тенĕ малалла Черчилль,—çав хăватлă ĕçе пуçараканни пулса тăрать, эпĕ вара—унăн активлă та хĕрӳллĕ помощникĕ пулса тăратăп. Рузвельт Америкăпа Великобритани Испанипе Португалин прависемпе интересĕсене тивмесĕр хытă асăрхаса тăрĕç тесе пĕлтернĕ, çакна Англи правительстви те чаплăн çирĕплетсе парать».

Францин лару-тăрăвĕ çинчен Черчилль çапла каланă:

«Эпир нимĕç ури айĕнче асапланса пурăнакан Франци çинчен шухăшлатпăр. Франция ура çине тăрĕ, тесе эпĕ тупа тума та хатĕр. Францин пуласлăхне эпĕ çирĕп ĕненсе тăратăп. Эпир Франция вăйлă та ирĕклĕ пултăр тесе, вăл хăй тавра пĕрлешнĕ империпе пĕрле тата ăна тавăрса панă Эльзаспа тата Лотарингипе пĕрле пултăр тесе çеç тăрăшатпăр».

«Эпир хамăр позицие сыхласа хăварасшăн,—тенĕ Черчилль.—Эпĕ Британи империне пĕтерме чухне председатель пулма мар, премьер-министр вырăнне лартăм. Эпĕ хам авалхи Британи монархийĕ тавра пĕрлешнĕ туслă йышлă нацисемпе çĕршывсен членĕ пулса тăнипе савăнса мухтанатăп, çав нацисемпе çĕршывсемсĕр тĕрĕслĕхлĕ ĕс пĕтсе ларма пултарнă пулĕччĕ».

«Африкăра пуçланă икĕ ĕç те,—тенĕ юлашкинчен Черчилль,—стратегипе политикăллă пĕр концепцийĕн паех пулса тăраççĕ, çав концепцие пурнăçламашкăн эпир тахçантанпах ĕçлетпĕр, вăл ĕç ăнăçассине ĕненме пирĕн халĕ пур сăлтавсем те пур».

Рузвельт Франкопа Кармонене послани янă

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Сурт Рузвельтăн Франко генерала янă посланине пичетлесе кăларнă. Çав посланире Рузвельт çапла калать: тĕрĕс хыпарсем тăрăх, Германипе Италия çитес вăхăтра Францин Çурçĕр Африкине оккупацилеме хатĕрленсе тăнă. Çурçĕр Америкăпа Кăнтăр Америкăна хӳтĕлемешкĕн тĕнĕл держависене Францин Африкине оккупацилеме чарма кирлĕ пулнă, тет. Рузвельт хăй Испани халăхĕ нейтралитет тытса пырассине, вăрçа хутшăнмасăр тăрассине шанса тăни çинчен çырать. «Испанин Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен хăрамалли çук»,—тенĕ посланире.

Рузвельт Португали президентне Кармонене те çавăн пек послани янă.

КАНАДĂПА МЕКСИКА ВИШИ ПРАВИТЕЛЬСТВИПЕ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХНĂ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăпа Мексика правительствисем Виши правительствипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахнă.

АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ КАСАБЛАНКĂНА ПЫРСА КĔНĔ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радиостанци Америка войскисем Касабланкăна пырса кĕни çинчен пĕлтернĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1100 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.